книж пал.

26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
18
ВЫРСАРНИКУН
146(6383) №

# Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр.

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

### Мускаври С. М. Киров ячӗпе тӑракан, Ленин орденлӗ „Динамо" заводри рабочисемпе работницӑсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗ Совет Союзӗнчи промышленноҫпа транспортри мӗнпур рабочисене, работницӑсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене

## ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ юлташсем!

«Совет Союзӗнчи халӑхсемпе вӗсен Хӗрлӗ Ҫарӗн, ҫавӑн пекех пирӗн союзниксемпе вӗсен ҫарӗсен те, гитлерла ирсӗрсене пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерессишӗн хаяр та йывӑр кӗрешӳ туса пымалла пулать. Ҫак кӗрешӳ вӗсене пысӑк жертвӑсем тӳсме, питех те чӑтӑмлӑ пулма, тимӗр пек ҫирӗп пулма хушать. Вӗсен хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсемпе майӗсене тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫ валли мобилизацилемелле тата ҫапла майпа мир тума ҫул хывса хатӗрлемелле».

**Сталин** юлташӑн ҫак тӗрӗс те чаплӑ сӑмахӗсем пирӗн чӗресене тарӑннӑн кӗрсе вырнаҫрӗҫ, пире пурне те фронтшӑн татах та ытларах вӑй хурса, татах та хӗрӳллӗнрех ӗҫлеме чӗнчӗҫ.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ **Сталин** юлташ чӗнсе каланине ҫине ответлесе пирӗн заводӑн коллективӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва ҫӗнӗ вӑйпа сарса ячӗ.

Пирӗн рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем, служащисем, заводӑн мӗнпур ҫыннисем,—заводра тахҫантанпах ӗҫлекен ватӑ рабочисемпе халӗ ҫеҫ килнӗ ҫамрӑк рабочисем те,—**Сталин** юлташ фронтшӑн икӗ хут ытларах вӑй хурса ӗҫлемелле тесе кӑтартса панине кирек мӗнле пулсан та пурнӑҫа кӗртме кирлӗ боевой приказ вырӑнне хурса йышӑнчӗҫ.

Паян Мускаври Киров ячӗпе тӑракан, Ленин орденлӗ «Динамо» заводри рабочисем, работницӑсем, инженерсем, техниксем тата служащисем ҫӗршыва, партипе правительствӑна хӑйсем пӗрремӗш ҫурҫул программине срокчен — июнӗн 7-мӗшӗнче тултарни ҫинчен рапортларҫӗ.

**Сталин** юлташӑн майӑн пӗрремӗшӗнчи приказӗ ҫине ответлесе, динамовецсем пӗрремӗш ҫурҫулта ҫӗршыва фронта планран ирттерсе 18 миллион тенкӗлӗх продукци пачӗҫ. Продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетсе тата ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе, эпир государствӑна 15 миллион тенкӗ перекетлесе патӑмӑр. Завод питех те кирлӗ материалсене, топливӑна тата электроэнергие расходлассине нумай чакарчӗ.

Анчах та, малашне йывӑр та татӑклӑ ҫапӑҫусем пулса иртмелле, Совет халӑхӗн ӑнӑланса лармалла мар, пачах урӑхла, хӑйӗн пӗрлӗхлӗ ҫар лагерьне, хамӑр ҫӗршыва, татах та ҫирӗплетмелле, татах та хӑватлӑ лагерь тумалла, тесе Сталин юлташ асӑрхаттарнине эпир яланах асра тытатпӑр.

Фронтшӑн икӗ хут ытларах вӑй хурса ӗҫлеме кирлӗ тесе **Сталин** чӗнсе каланине асра тытса, пирӗн заводӑн коллективӗ 1943 ҫулхи иккӗмӗш ҫурҫулта социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатса пыма йышӑнчӗ, хӑйӗн умне ССР Союзӗнчи Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци 26 ҫул тултарнине тивӗҫлипе кӗтсе илес задача лартрӗ.

С. М. Киров ячӗпе тӑракан «Динамо» завод коллективӗ, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара май пур таранах пулӑшас кӑмӑлпа ҫунса, ҫакӑн пек обязательствӑсем илет:

1. Ҫулталӑк планне Сталинла Конституци кунӗ тӗлне—кӑҫалхи декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне тултармалла.
2. Виҫҫӗмӗш квартал валли государство панӑ плана 6—7 миллион тенкӗлӗх ирттерсе тултармалла.
3. Продукцин пысӑк пахалӑхӗшӗн пӗрмаях кӗрешмелле.
4. Ӗҫ тухӑҫлӑхне плапа палӑртнинчен 10 процент чухлӗ ытларах ӳстермелле тата продукцин хӑйне ларакан хакне 10 процентран сахал мар чакармалла.
5. Ҫулталӑк вӗҫлениччен 500.000 киловатт-сехет электроэнерги перекетлесе хӑвармалла.
6. Заводра пӗрлешсе апатланас ӗҫе кӑтартуллӑн организацилемелле.
7. Подсобнӑй хуҫалӑхсенче, рабочисемпе служащисем пӗрлешсе тата пӗчченшерӗн лартнӑ пахчасенче ҫимӗҫсене лайӑх пӑхса ӳстерсе, пысӑк тухӑҫлӑ ҫимӗҫсем туса илмелле, вӗсене вӑхӑтра тата пӗр тӑккаламасӑр шухса кӗртмелле.
8. Заводӑн пурӑнмалли ҫуртӗрӗсене вӑхӑтра тата лайӑх юсаса хатӗрлемелле, рабочисен хваттерӗсене, ҫавӑн пекех тата заводӑн цехӗсене те хӗл валли вӑхӑтра хатӗрлесе ҫитермелле.

Мускаври С. М. Киров ячӗпе тӑракан, Ленин орденлӗ заводӑн коллективӗ Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисене: фабрикӑсемпе заводсенчи, шахтӑсемпе рудниксенчи тата транспортри рабочисене, работницӑсене, инженерсене, техниксене тата служащисене ленинла-сталинла социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн ялавне татах та ҫӳлерех ҫӗклеме чӗнет.

Фронта паян—ӗнерхинчен, ыран — паянхинчен ытларах та лайӑхрах продукци памалла!—Ҫакӑ ӗнтӗ кашни совет предприятийӗн, кашни совет ҫыннин правили пулса тӑмалла.

Пирӗн ӗҫри вӑй-хӑватсем ҫӑлкуҫӗ пысӑк. Пирӗн производствӑри кадрсем ӳссе пыраҫҫӗ, производствӑн технологийӗ пӗрмаях лайӑхланса пырать. Промышленноҫра ҫӗнӗ ресурссем шыраса тупса пирӗн завод производствӑра поточнӑй метод организацилет. Ҫак мероприяти пире продукци кӑларассине ӳстерме май парать.

Пирӗн вайсемпе пирӗн хавхаланӑвӑн тӗп ҫӑлкуҫӗ вара—пирӗн тӗрӗс ӗҫ пулса тӑрать. Эпир хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва хӳтӗлетпӗр, эпир ирӗклӗхе юратакан ҫӗршыври ирӗклӗ ӗҫе хӳтӗлетпӗр.

Халлӗхе вӑрҫӑ пырать пулсан—вӑрҫӑ ыйтӑвӗсемпе ҫеҫ пурӑнмалла. Хамӑрӑн пӗтӗм вӑя, хамӑрӑн пӗтӗм пурнӑҫсене пӗр задачӑна—ылханлӑ тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас тата вӑхӑтлӑха оккупациленӗ совет территорийӗсене Гитлер кӗтӗвӗсенчен хӑвартрах тасатас задачӑна пӑхӑнтармалла.

Юлташсем, хӗрӳллӗнрех ӗҫлер! Хамӑрӑн вӑя шеллемесӗр татах та тимлӗнрех ӗҫлер! Совет хӗҫпӑшалӗ ҫӗнтерсен пирӗн ӗҫ те ахаль ҫухалмӗ.

Сывӑ пултӑр пирӗн мухтавлӑ Совет ҫӗршывӗ!

Сывӑ пултӑр паттӑр совет халӑхӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ Хӗрлӗ Ҫар!

Хамӑрӑн аслӑ полководеца, хамӑрӑн ҫулпуҫа тата учителе **Сталин** юлташа—мухтав!

Чӗнсе калание С. М. Киров ячӗпе тӑракан «Динамо» заводри рабочисен пухӑвӗнче 1943 ҫулхи июлӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ.

Завод коллективӗ хушнипе ҫаксем алӑ пуснӑ:

Завод директорӗ **И. Т. Скиданенко**, главнӑй инженер **Д. С. Черничкин**, партком секретарӗ **Н. А. Орловский**, завком председателӗ **Д. И. Мельников**, ВЛКСМ Комитечӗн секретарӗ **И. Ф. Илюхин**, стерженщица **Н. Г. Поротикова**, формировщик **А. А. Колесников**, цех начальникӗ **Л. И. Леви**, мастер **Н. Е. Прокофьев**, цех начальникӗ **И. Д. Зиновьев**, мастер **И. Г. Фатин**, изолировщица **Удалова**, токарь **В. В. Елисеев**, сварщик **В. И. Суслов**, строгальщик **Г. С. Коновалов**, цех начальникӗ **А. В. Каштуров**, токарь **К. Н. Ланикина** тата ыттисем те.

## Совет Информаци Бюровӗнчен

*ИЮЛӖН 16-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА*

**Июлӗн 16-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем фронтӑн ОРЕЛ участокӗнче наступлени туса пырса, 10—15 километр малалла куҫнӑ. Кун каҫиччен нимӗҫ войскисен 11 контратакине, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстерсе, сире-сире пӑрахнӑ.**

**ОРЕЛПА КУРСК енче пирӗн войскӑсем, оборона тытака, тӑшмана хирӗҫ ӑнаҫлӑн атакӑсем туса пырса, кӑштах малалла куҫнӑ.**

**БЕЛГОРОД енче—разведчиксем вӑйлӑн шыраса ҫӳренӗ.**

**Июлӗн 15-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем фронтӑн Орел участокӗнче, Орелпа Курск тата Белгород енӗсенче нимӗҫсен 129 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче, зенитнӑй артиллерирен персе нимӗҫсен 76 самолетне ӳкернӗ.**

☆ ☆ ☆

Фронтӑн Орел участокӗнче пирӗн войскӑсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине тата унӑн халь килсе ҫитнӗ резервӗсем тӑвакан контратакӑсене ҫӗнтерсе, малалла наступлени туса пынӑ. Контратака тӑвакан нимӗҫсене хамӑрӑн вут-ҫулӑмӑн мӗнпур хӑвачӗпе кӗтсе илсе, пирӗн чаҫсем тӑшмана сире-сире пӑрахаҫҫӗ тата ӑна пысӑк ҫухатусем тӳстереҫҫӗ.

Пӗр участокра Аскалепов юлташ командир пулса тӑракан чаҫа хирӗҫ нимӗҫсен 80 танкӗ контратака тунӑ. Пирӗн боецсем тӑшмана хирӗҫ ҫапнипе сирсе пӑрахнӑ, нимӗҫсен 36 танкне пӗтерсе тӑкнӑ, вӗсенчен 3 танкӗ „тигр" йышши йывӑр танксем пулнӑ. Пӗр гвардейски часть нимӗҫ пехотин икӗ полкне пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр чаҫӑн боецӗсем, нимӗҫсем вӑйлӑн ҫирӗплетнӗ халӑх пурӑнакан пункта йышӑнса. тӑшманӑн 100 ытла салтакне тыткӑна илнӗ тата 11 оруди, ултӑ кӗпҫеллӗ 6 миномент, боеприпассемпе продовольствин 6 пысӑк складне тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн танкистсемпе пехотинецсем тӑшман войскисен группине хӗскӗчпе хӗссе илнӗ те халӗ ҫав группӑна пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫаҫҫӗ.

Пирӗн 4 самолет нимӗҫсен 5 истребителӗпе ҫапӑҫма тытӑннӑ. Летчик-лейтенант Гончаров юлташ тӑшманӑн 2 самолетне, летчиксем Григорьевпа Попов юлташсем вара тӑшманӑн пӗрер самолетне персе антарнӑ.

* * *

Орелпа Курск енче пӗр соединенин чаҫӗсем артиллерирен персе тапӑннӑ хыҫҫӑн тӑшманӑн позицийӗсене атакӑланӑ. Хаяр ҫапӑҫура пирӗн боецсем, нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, тӑшман оборонин ҫирӗплетнӗ узелне йышӑнса илнӗ. Тӑшманӑн, вилнисене кӑна шутласан та, 2.000 ытла салтакӗпе офицерӗ пӗтнӗ. Нимӗҫсен 25 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, артиллерин 5 батарейине, минометсен 8 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман салтакӗсене тыткӑна илнӗ тата трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Лисичанск районӗнче пӗр-пӗрин ҫине сайра-хутра перкелесе тӑнӑ. Пирӗн артиллеристсем нимӗҫсен хӑй тӗллӗн куҫса ҫӳрекен орудине тата 5 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Снайперсем Жуков, Пятов, Курбатов тата Удовкин юлташсем икӗ кун хушшинче 13 нимӗҫе вӗлернӗ. Ефрейтор Божко юлташ противотанковӑй пӑшалпа нимӗҫсен „Фокке—Вульф—190" йышши самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнче артиллерирен персе нимӗҫсен 10 дзотне тата 6 блиндажне ишӗлтернӗ, пӗр орудине, 3 минометне тата груз-сем тиенӗ 3 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр чаҫри минометчиксем нимӗҫсен фронт линийӗ патнелле пыракан салтакӗсен пысӑк ушкӑнӗ ҫине пенӗ. Вӑйлӑн персе нимӗҫсене сапаласа янӑ. Ҫул ҫинче тӑшманӑн темиҫе вуншар вилли выртса юлнӑ.

* * *

„Большевик" ятлӑ отрядри партизансем, Гомель облаҫӗнче кӗрешекенскерсем, июлӗн 2-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле нимӗҫсен артиллери склачӗ вырнаҫса тӑнӑ ҫӗре сӑр хӑнса кӗнӗ. Партизансем склад ҫурчӗсене минӑсем хунӑ та хӑвӑрт тарса пытаннӑ. Тепӗр темиҫе минутӑран ҫав тери вӑйлӑ взрыв кӗрлесе кайнӑ. Нимӗҫсен боеприпас склачӗ сывлӑшалла сирпӗннӗ. Тепӗр кунне ҫав отрядри подрывниксен ушкӑнӗ тӑшманӑн фронт линийӗ патнелле пыракан 2 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушени пулнипе 2 паровоз тата горючи тултарнӑ 53 цистерна ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Фронтӑн Орел участокӗнче Хӗрлӗ Ҫарӑн наступлени туса пыракан чаҫӗсем нимӗҫсен нумай салтакӗсене тыткӑна илнӗ. Нимӗҫсен 211-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен тыткӑна илнӗ обер-ефрейтор Иоганн Фрейлих ҫапла каланӑ: „Пирӗн участокри оборона системине офицерсемпе салтаксем никам ҫӗнтерсе илейми тӗреклӗ тесе шутланӑ. Фронт тӑрӑх траншейӑсен 3 линине тӑршшӗпех чавса тухнӑ, вӗсен умне йӗплӗ пралук карти тытнӑ. Пирӗн позицисем патне пымалли мӗнпур уҫӑ вырӑнсенче пехотӑпа танксене хирӗҫ ҫавтери нумай минӑсем лартса тухнӑ пулнӑ. Инженерла чӑрмавсене 1942 ҫулта туса лартнӑ дзотсемпе вӑйлӑлатнӑ. Чи вӑйлӑ атакӑсене те сирсе яма пирӗн пемелли хатӗрсем ҫителӗклех пулнӑ. Анчах вырӑссем тапӑнса килни пирӗн шанчӑксене пӗтӗмӗшпех ӳпӗнтерсе пӑрахрӗ. Вырӑссем пирӗн оборонӑна малтанхи кунах татса кӗчӗҫ те дивизие йывӑр ҫухатусем тӳстерчӗҫ".

Нимӗҫсен 5-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 31-мӗш танковӑй полкӑн 6-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Курт Писколь ҫапла каласа панӑ: „Вырӑссем Орелтан ҫурҫӗртерехре нимӗҫсен оборонине татса кӗрсен, 5-мӗш танковӑй дивизие, Хӗрлӗ Ҫар тапӑнса килнине чарса лартас шутпа, питӗ хӑвӑрт ҫав района куҫарчӗҫ. Июлӗн 13-мӗшӗнче тул ҫутӑлсанпа атака тума хатӗрленсе рубеж патне пынӑ чухне вырӑс артиллерийӗ пирӗн ҫине пӗтерсе тӑкмаллах пеме тытӑнчӗ, ҫур сехет хушшинче 16 танка ҫунтарса ячӗ. Ҫӑлӑнмалли пӗр ҫул кӑна юлчӗ—хӗҫпӑшала пӑрахмалла. Пирӗн экипаж ҫӗмӗрӗлнӗ машинӑран тухрӗ те ҫавӑнта пырса ҫитнӗ вырӑс пехотин аллине тыткӑна парӑнчӗ".

## Физкультурниксен Пӗтӗм Союзри кунӗ Шупашкарта

Паян паллӑ туса ирттерекен физкультурниксен Пӗтӗм Союзри кунӗ пирӗн ҫӗршывра яланах ҫамрӑксен сывлӑхӗпе кӑмӑлӗн ҫирӗплӗхне пӑхса тухмалли кун пулнӑ.

Виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ ҫав куна пирӗн ҫӗршывра физкультурниксем вӑрҫӑ условийӗсенче паллӑ тӑваҫҫӗ. Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, геройла Хӗрлӗ Ҫарпа партизансен ретӗсенче совет физкультурникӗсем те тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Физкультура обществисем Хӗрлӗ Ҫара ҫулсерен тӗреклӗ те чӑтӑмлӑ боецсем пиншерӗн хатӗрлесе параҫҫӗ.

Паян Шупашкар хулинче ирхипе 11 сехетре физкультурниксен парачӗ пулать. Парадра «Динамо», «Буревестник», «Медик», «Спартак» тата ытти физкультура обществисем пулаҫҫӗ. Ун хыҫҫӑн Атӑл ҫинче военизированнӑй эстафета пулса иртет. Кӑнтӑрла иртсен 4 сехетре стадионра Шупашкарти спортсменсемпе Хусантан килнӗ спортсменсен юлташла тӗлпулӑвӗ пулать. Каҫхине 7 сехетре Хусанти иккӗмӗш сборнӑй командӑпа Шупашкарти «Сталинец» команда футболла выляҫҫӗ. Ҫавӑн пекех стадионра баскетбол тата волейбол енӗпе ӑмӑртусем пулса иртеҫҫӗ.

### Физкультурниксен Пӗтӗм Союзри кунӗ районсенче

ТАВАЙ. Физкультурниксен Пӗтӗм Союзри кунӗнче райцентрта шывра ишес тата чупас тӗлӗшпе ӑмӑртусем пулаҫҫӗ. Ӑмӑртӑва 80 ҫын хутшӑнать. Хӗрачасем —100 метрлӑ, арҫын ачасем — 150 метрлӑ дистанцие чупаҫҫӗ. Ӑмӑртӑва пур енчен те хатӗрлесе ҫитнӗ. Ку ӗҫе ВКП(б) райкомӗн ҫарӗҫ пайӗн заведующийӗ Харитонов, исполком райсовечӗ ҫумӗнчи физкультурӑпа спорт инспекторӗ Афанасьева юлташсем ертсе пыраҫҫӗ.

**А. ЯКОВЛЕВА,**
**ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.**

ҪӖМӖРЛЕ. Паян райцентрта физкультурниксен Пӗтӗм Союзри кунӗ ячӗпе граната ывӑтас, чупас, шывра ишес тата волейболла вылянс тӗлӗшпе ӑмӑртусем пулса иртеҫҫӗ. Ӑмӑртӑва 300 ҫын ытла хутшӑнмалла. Ку ӗҫе исполком райсовечӗ ҫумӗнчи физкультурӑпа спорт инспекторӗ Логунова юлташ ертсе пырать. Ӑмӑртӑва ирттермелли вырӑнсемпе кирлӗ япаласене пурне те хатӗрлесе ҫитернӗ.

**О. КОЩЕЕВА,**
**ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.**

## Хӗрлӗ ялав илнӗ артельре

Июлӗн 16-мӗшӗнче Шупашкарти лесхимартельре Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата пӗрремӗш преми илнӗ ятпа рабочисен пухӑвӗ пулса иртнӗ. Пухура Чӑваш АССР Совнарком председателӗн заместителӗ Никитин, РСФСР промкооперации управленийӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ Степанов юлташсем пулчӗҫ.

Пухӑва Никитин юлташ уҫать. Малтанах вӑл артель коллективне Чӑваш АССР Правительствипе ВКП(б) Обкомӗ ячӗпе хӗрӳллӗн саламлать.

— Эсир пӗрремӗш ҫурҫулта аван ӗҫлерӗр. Июнь уйӑхӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пултӑр. Паллах, ку ӗҫ вӑя хумасӑр пулман. Эпир сирӗн коллектив малалла та лайӑх ӗҫлесе пырасса шанса тӑратпӑр,—тет вӑл.

Никитин юлташ Хӗрлӗ ялава лесхимартелӗн председательне Викторов юлташ аллине парать. Викторов юлташ Хӗрлӗ ялава алла илсе, сӑмах калать.

— Артель коллективӗ июнь уйӑхӗнчи задание пӗтӗм продукци енӗпе 314 процент, ширпотреб енӗпе 417 процент тултарнӑ. Анчах ку ҫитӗнӳсем ҫителӗклӗ мар-ха. Паян илнӗ награда пире татах та лайӑхрах ӗҫлеме хушать. Ҫак пысӑк награда ҫине эпир ӗҫлӗн ответлетпӗр. Хӗрлӗ ялава хамӑр аллӑрах тытассишӗн кӗрешетпӗр,—тет вӑл. Пухура артельри стахановецсемпе ударниксем те тухса калаҫрӗҫ. Стахановец Железов юлташ июль уйӑхӗнчи задание 300 процент тултарма обязательство илчӗ.

Лесхимартель июль уйӑхӗнчи задание 10 кун хушшинче 60,2 процент пурнӑҫланӑ. План тӑрӑх уйӑхра 50 пин тенкӗлӗх продукци кӑлармалла пулсан, июлӗн 11-мӗшӗ тӗлне 31 пин тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ. Пысӑк парне илнӗ ятпа артель коллективӗ тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тытӑнчӗ. Вӑл июлӗн 20-мӗшӗ тӗлне уйӑхри производство планне пурнӑҫлама обязательство илчӗ.

## Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Советӗнчен

**Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ партипе пӗтӗм ӗҫҫыннисене чӗререн хурланса ҫакӑн ҫинчен пӗлтереҫҫӗ: ҫак ҫулхи июлӗн 16-мӗшӗнче, 16 сехет те 15 минутӑра, Мускав патӗнчи Горкӑра нумайччен чирлесе пурӑннӑ хыҫҫӑн ватӑ революционер, большевиксен партийӗн членӗ, государственнӑй деятель, хӑйӗн пурнӑҫне Ленинпа Сталин партийӗн ӗҫне, халӑхшӑн тӑрӑшас ӗҫе панӑ Дмитрий Ильич УЛЬЯНОВ вилчӗ.**

**ПӖТӖМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ.**

**ССР СОЮЗӖН ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ.**

## Маяковский—пирӗнпе

Владимир Владимирович Маяковский ҫуралнӑранпа ыран 50 ҫул тултарать. Вӑл паян пирӗнпе пӗрле пулма пултарнӑ пулӗччӗ, унӑн чӗрӗ те хӑватлӑ сасси халӗ, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ кунсенче, халӑха кӗрешӗве, ҫӗнтерӳ патне чӗнекен аслӑ чан сасси пек янӑранӑ пулӗччӗ.

Пирӗн ретре Маяковский чылайранпа ҫук ӗнтӗ, анчах унӑн юпа ҫырнӑ, чӗререн шӑратса кӑларнӑ сӑввисене совет халӑхӗ фронтра та, тылра та яланах асра тытать, вӗсемпе хӑйне хавхалантарса пырать. Халӑх ҫав сӑвӑсене нихӑҫан та манас ҫук, мӗншӗн тесен Маяковскин пултарулӑхӗнче халӑхӑн шухӑш-кӑмӑлӗсем, ӗмӗчӗсем пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ.

Маяковский революци поэчӗ пулнӑ. Вӑл революци ячӗпе революци валли ҫырнӑ. Класс кӗрешӗвӗнчен татӑлса кайнӑ поэзие вӑл йышӑнма пултарайман. Поэт хӑйӗн талантӗпе рабочи класшӑн ӗҫлеме тивӗҫлӗ,—ҫакӑн пек пулнӑ Маяковскин лозунгӗ. «Пирӗн хаяр класс кӗрешӗвӗнче кам хӑйӗн перипе пролетариата хӗҫпӑшаллантармалли арсенала парать, кам нимӗнле кӑткӑс ӗҫе те тиркесе тӑмасть, кам революцин, халӑх хуҫалӑх строительствин нимӗнле теминчен те йӗрӗнсе тӑмасть, кам кирек мӗнле хуҫалӑх ыйтӑвӗпе те агитка ҫырать, ҫавӑ—поэт», —тенӗ вӑл.

Маяковский хӑйӗн сӑмахӗсене хӑйӗн мӗнпур пултарулӑхӗпе тӳрре кӑларнӑ. Халӑха вӑратса ҫӗклемелле, халӑх хушшинчи кивӗ тӗшмӗшлӗхсене тымарӗпех тӑпӑлтарса кӑлармалла, халӑх чӗринче кӗрешӳ ҫулӑмне чӗртсе ымалла, халӑха хӑйӗн государствине, революцире ҫӗнтерсе илнисене хӳтӗлеме, ҫӗр ҫинче ҫӗнӗ пурнӑҫ тума чӗнмелле, ҫӗклемелле—ҫакӑн пек пулнӑ унӑн задачисем.

Маяковский Ленина пӗтӗм чун-чӗререн юратнӑ. Владимир Ильич ҫинчен вӑл чи ӑшӑ кӑмӑллӑ сӑвӑсем шӑратнӑ. Поэт Ленина халалласа чаплӑ поэма ҫырнӑ. Ленина юратни ҫинчен ҫырма халӑх унран чи ӑшӑ, чи ҫепӗҫ сӑмахсем ыйтнине Маяковский туйнӑ. Ҫав сӑмахсем халӑха татӑклӑ ҫӗнтерӳ тума кӗрешӗве чӗнекен сӑмахсем те пулса тӑма тивӗҫлине те лайӑх ӑнланнӑ вӑл.

«Владимир Ильич Ленин» ятлӑ поэмӑн кашни сӑмахне Маяковский чӗререн шӑратса кӑларнӑ. Ҫав поэмӑна вӑл нумай вӑхӑт хушши пӗтӗм вӑйне хурса ҫырнӑ, мӗншӗн тесен, ҫав произведени Ленинӑн ӗҫӗ пекех хӑватлӑ та аслӑ пулма тивӗҫлине вӑл ӑнланнӑ.

Маяковский Владимир Ильичӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен ҫырнӑ чухне пирӗн парти историне те анлӑн кӑтартса парать, мӗншӗн тесен Ленинпа парти пӗр-пӗринпе ӗмӗр уйӑрӑлми таччӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Партипе Ленин —
йӗкӗреш тӑвансем.
Кам аннемӗр-историрен
хаклӑрах тейӗн?
Эпир калатпӑр—Ленин,
шухӑшлатпӑр—парти,
Эпир калатпӑр—парти,
шухӑшлатпӑр—Ленин.

Маяковскин пӗтӗм пултарулӑхӗнче тӑван ҫӗршыва чунтан юратни шӑрапса тӑрать. Хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗн анлӑн саралса выртакан сӑн-сӑпачӗпе хавхаланса, Маяковский Октябрьти революци чӗртсе ҫӗнетнӗ совет ҫӗрӗн илемне мухтавласа юрӑсем хывать.

Маяковский хӑйӗн тӑван халӑхӗн вӑйне пӗтӗм чун-чӗререн шанса, ӗненсе тӑнӑ. Совет халӑхӗ мӗнпур йывӑрлӑхсене ҫӗнтерессине, пур чӑрмавсем урлӑ та улӑпла утӑмпа утса каҫассине вӑл пӗлнӗ, мӗншӗн тесен пирӗн совет ҫӗршывӗнче «чӑн-чӑп ҫынсем, тӳрӑран хӑйӗнчен те ырӑ чунлӑрах та лайӑхрах ҫынсем ҫураласҫӗ».

Маяковский хӑйӗн поэзири пултарулӑхе хӑйӗн политикӑллӑ ӗҫӗнчен уйӑрман. Уншӑн ҫавсем иккӗшӗ те—пӗр ӗҫ пулнӑ. Хӑйӗн пултарулӑхне вӑл пӗтӗмпех политикӑна пӑхӑнтарнӑ. Вӑл Ленин—Сталин партийӗн шухӑшӗсене поэзи чӗлхипе пӗтӗҫтерсе каланӑ. Маяковский ҫапла ҫырнӑ:

Штыкпа танлаштарччӑр—
тетӗп эп —
перона,
Чугунпа,
шӑранан хурҫӑпа
пӗр халлӗн
Сӑвӑ ӗҫӗ ҫинчен
Политбюроран
докладсем тутӑр
Сталин.

Маяковскин пери чӑннипех те штык, вӑл совет халӑхӗн аллинче тӑшмана штыкран та, тупӑран та, танкран та вӑйлӑрах аркатакан хӗҫпӑшал пулнӑ. Ҫакӑн пек хӗҫпӑшал пулнӑ Маяковскин пери граждан вӑрҫи саманинче, ун чухне унӑн ҫулӑмлӑ сӑмахӗ халӑха ҫапӑҫӑва чӗннӗ. Ҫакӑн пек пулнӑ унӑн пери мирлӗ пурнӑҫ тунӑ тапхӑрта та, ун чухне вӑл халӑха хамӑрӑн оборонӑна ҫирӗплетме, Хӗрлӗ Ҫара тӗреклетме чӗннӗ:

Штыка ҫӗре пӑрахма
вӑхӑт ҫитмен,
Хӗрлӗ Ҫарӑн ретне
тӗреклет!

Совет халӑхӗн чи ылханлӑ тӑшманӗ нимӗҫ фашизмӗ пулса тӑнине Маяковский ҫӗлнӗ. Вӑл халӑха фашистсемпе мӗнле калаҫмаллине вӗрентнӗ:

Фашистсемпе калаҫ
пушар чӗлхипе,
Пуля вучӗпе,
штык ҫивӗчӗпе.

Икӗ тӗнчен, икӗ системӑн—фашизмпа социализмӑн тытӑҫӑвӗнче социализм ҫӗнтерессине, совет халӑхӗ ҫӗнтерессине, Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерессине Маяковский пӗлнӗ. Мӗншӗн тесен:

Республика
хӑй чӗрине
ҫарпа пӗтӗҫтернӗ.
Тӗнчере кунтан
ҫирӗпрех хурҫӑ ҫук та
Хӗрлӗ Ҫар —
пирӗн тӗрекӗмӗр,
Пирӗн Хӗрлӗ Ҫара
мухтав!

Совет ҫӗршывӗн чи хӑрушӑ тӑшманне ҫапса аркатассине, пӗтерсе тӑкассине, ӑна хамӑрӑн ҫӗршыв талкишӗнчен кӑларса ывӑтассине Маяковский пӗлнӗ. Тӑван ҫӗршыв умне хӑрушлӑх тухса тӑрсан, мӗнпур совет халӑхӗ, пӗр ҫын пек пулса, хӑйӗн тӑван ҫӗршывне хӳтӗлеме тухассине вӑл пӗлнӗ.

Кӑшт хӑрушлӑх
сисӗнсенех,
ҫӗкленӗпӗр
ҫӗр миллионшерӗн
тӗпӗнченех!

1930 ҫулхи январӗн 21-мӗшӗнче, хӑй вилес умӗн нумай мар малтан, Маяковский Владимир Ильич Ленин ҫинчен ҫырнӑ хӑйӗн поэмине Мускаври Пысӑк Театрта — Ленин вилнӗренпе ултӑ ҫул тултарнӑ ятпа пухӑннӑ траурлӑ чаплӑ ларура вуласа панӑ. Пухура Политбюро членӗсем пулнӑ, Сталин юлташ пулнӑ. Политбюро членӗсем, Сталин юлташ Маяковскине алӑ ҫупса саламланӑ.

Нумай мар вӑхӑт иртсен, Сталин юлташ Маяковский ҫинчен аслӑ сӑмахсем каланӑ. Ҫав сӑмахсене халӗ пирӗн совет ҫӗршывӗнчи кашни гражданин асра тытать:

«Маяковский пирӗн совет саманинчи чи лайӑх, чи талантлӑ поэт пулнӑ тата пулса юлать те».

Маяковский—пирӗнпе! Мӗншӗн тесен унӑн вӑхӑт тӗрӗслевӗ витӗр тухнӑ сӑввисем, паянхи кун ҫырнӑ сӑвӑсем пек илтӗнекен сӑввисем — пирӗн чӗрере!

**Сергей ИВАНОВ.**

## Ясли хӗрарӑмсене тухӑҫлӑн ӗҫлеме май парать

СЕНТЕР. Пирӗн «Новый путь» колхозра иртнӗ ҫул ачасене валли ясли площадка уҫса памарӗҫ. Ҫавна пула ачаллӑ хӗрарӑмсем чалайӗшӗ уйхирти ӗҫе хутшӑнаймарӗҫ.

Ҫакна шута илсе иртнӗ ҫул хӗллех тупӑш валеҫнӗ чухне 1943 ҫулта ачасен яслийӗпе площадкине организацилеме продуктсем уйӑрса хӑвартӑмӑр.

Халӗ ӗнтӗ пирӗн колхозра ҫуракиччен варах ачасен яслийӗпе площадки ӗҫлет. Унта 150 ача ытла пурӑнать. Фронтовиксен ачисем пурте ясли пе площадкӑра пурӑнаҫҫӗ. Вӗсемшӗн амӑшӗсем пӑшӑрханмаҫҫӗ, кулленех колхозра тухӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Пӗчӗк ачасем пурте площадкӑра пулнӑ пирки халӗ 8—9 ҫулти хӗрачасемпе арҫын ачасем те колхозра хӑйсене май ҫӑмӑл ӗҫсене тӑваҫҫӗ.

**А. СЕРГЕЕВА.**

# Республика уйхирĕсенче

## Суйласа тырă выраççĕ

ШАХАСАН, июлĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Райцентрти «Красный Октябрь» колхоз уйрăм участоксем çинче суйласа паянхипе иккĕмĕш кун ыраш вырать. Ыраш 15 гектар çинче вырмалла пулса çитнĕ. Паянхи куна çурласемпе çеç 13 гектар ыраш вырнă.

Районри ытти хăшпĕр колхозсем те ыраш тĕллĕн-тĕллĕн вырмалла пулнă: Паян ыраш вырма тата «Сосновка», «Орешник» колхозсем тунă.

**И. СКВОРЦОВ,**
**Райисполком председателĕ.**

## Туса çитермен ĕçсем пур-ха

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, июлĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Июлĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ тĕрĕслев хăшпĕр колхозсенче уборкăна хатĕрленес ĕçре чылай пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕ. Унтанпа ĕнтĕ халĕ колхоз руководителĕсем тĕрĕслӳре палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Анчах çапах та уйрăм колхозсенче машинăсене халĕ те хаклаймаççĕ сисĕмлĕ. Çавăн пек колхозсен руководителĕсем çурласемпе кĕреплелле çавасем çине ытларах шанаççĕ пулмалла. Сăмахран, «Память Ленина» колхозра (председателĕ Балков юлташ) 2 жнейка паян кун та çăмăр айĕнче ларать. «Пятилетка» колхозра (председателĕ Немцев юлташ) 3 жнейкăна вĕлтрен пусса илнĕ. «Красный Тогаш» колхозра (колхоз председателĕ Кудюков юлташ) 4 жнейкăн чаçĕсене çĕмĕрсе, салатса пĕтернĕ. Çак колхозран машиноведсен курсне вĕренме пĕр çынна та яман.

Асăннă колхозсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе иртнĕ çулта та япăх иртернĕ. Çав колхозсен руководителĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илмен. Вĕсен çавна асра тытса, уборкăна хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Кая юлакан колхозсем малта пыракан колхозсенчен вĕренмелли сахал мар. Сăмахран, Штанашри Буденный ячĕпе тăракан колхоз уборкăна пур енĕпе те кăтартуллăн хатĕрленсе çитнĕ. Кунта уборка умĕнхи ĕçсене те—тырпулсене çумкурăксенчен тасатассине, утă çулассине, çĕртме сухи сухалассине вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ. Колхозăн 4 жнейка пур, вĕсене пурне те тĕплĕн юсаса лартнă, ĕçлеттерсе тĕрĕсленĕ. Колхоз 90 лашана кӳлмелли хатĕрсене пурне те юсанă. Тырă турттарма ещĕклĕ 4 урапа тунă: 4 витнĕ итемĕн çийĕсене шыв анмалла мар çĕнĕрен витнĕ. Колхоз ача ясли организациленĕ. Çакă вăл хĕрарăмсене пурне те ĕçе тухма май парать. Бригадирсем хăйсен участокĕнчи ыраш вырăнăн-вырăнăн пулса çитессине куллен сăнаса тăраççĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхозра массăллă-политикăллă ĕçе аван организациленĕ. Ку енĕпе вулав çуртĕн пуçлăхĕ Бухвостова юлташ пысăк активлăхпа ĕçлет. Кашни бригадăра агитаторсем уйăрнă. Вĕсем колхозниксене тĕнчере халь пулса иртекен событисем çинчен, Хĕрлĕ Çар фронтăн Орел участокĕнче наступлени пуçласа яни çинчен ăнлантарса параççĕ.

Çавăн пекех Кубнянри «Свет» колхоза та лайăх енĕпе палăртмалла. Колхоз уборкăна тухма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. «Энгельс» колхозра тимĕрçĕ М. Тарасов тăрăшса ĕçленипе мĕнпур ялхуçалăх инвентарьне тĕплĕн юсаса çитернĕ. Çак кунсенче вăл 2 молотилка юсаса пĕтерчĕ.

ВКП(б) райкомĕ районри актива штатра тăман пропагандистсем пулса ĕçлеме колхозсене ячĕ. Вĕсем ĕнтĕ ĕçе тытăннă та. Вĕсем колхозниксене партипе правительствăн постановленийĕсене ăнлантарса параççĕ, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар фронтсенче тăвакан çитĕнӳсем çинчен каласа кăтартаççĕ.

Районри партипе совет органĕсем кая юлса пыракан колхозсене малта пыракан колхозсемпе танлашма пулăшсан, Хĕрлĕ Чутай районĕ кăçал тырпул вырса пуçтарас ĕçе ăнăçлăн туса ирттерĕ.

**К. ФОНДЕРКИН.**

## Колхозсем кăçал хире организованно тухаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Ыраш мĕнле пулса пынине колхозсенче сăнасах тăраççĕ. Ыран «Новая жизнь», «Кызыл Сабанча», «Красный Октябрь», «Игенче», «Большевик» колхозсем вырăнăн-вырăнăн пулнă ыраша вырма тухаççĕ. Çак колхозсем уборкăна пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ.

«Оборона», «Восход» колхозсем каярах юлса пыраççĕ. Вĕсем утă çулса пĕтерейменех-ха. Çак колхозсенче тата транспорт инвентарĕ çителĕксĕр. Çавăн пекех витнĕ итемсене те пур колхозсенче те мар-ха туса йĕркеленĕ. Сăмахран, «Заветы Ильича» колхозра витнĕ итем туман.

Комбайнерсемпе трактористсен тата машиноведсен кадрĕсем çителĕклĕ тăрăн пур. Пĕтĕмпе кăçал 101 тракторист, 11 комбайнер тата комбайнер помощникĕсем пулма 39 çын вĕрентсе кăларнă. Вĕсем—çĕнĕ çынсем, вĕсене тимлĕн пулăшса пымалла пулать.

Паян районри актив колхозсене тухса кайрĕ. Районран кайнă çынсем колхозсенче уборка пĕтиччене пулаççĕ, вĕсем ялти массăллă-политикăллă ĕçе организацилеççĕ, колхозниксене хальхи вăхăтри хĕрӳллĕ ĕçе мобилизацилеççĕ.

Колхозсем хире организованно тухса, вăйлă тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç.

**Т. МЫШКИН,**
**ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.**

## Тырă вырма тухас умĕн

Буденный ячĕпе тăракан колхоз уборкăна иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илсе хатĕрленет. Колхозниксем тырă вырма тухиччен утă çулса пуçтарма, выльăхсем валли хĕл каçармалăх çулçă, утă хатĕрлеме т. ыт. ĕçсене туса пĕтерме пулнă. Халĕ вăл ĕçсем ăнăçлăн пурнăçланса пыраççĕ. Çак кунсенче кунта 35 гектар çинчен утă çулса пуçтарчĕç, выльăх-чĕрлĕх витисен çийĕсене витрĕç, 47 тонна силос хыврĕç. Çав вăхăтрах колхозниксенчен тепĕр пайĕ тырпулсем çинчи çумкурăкĕсене çумласа тăрать. Çĕрулми куналаса пĕтерчĕ. 79 гектар çĕртме сухи тунă тата 1.800 лав тислĕк кăларнă.

Çапла ĕçлени вăл пĕтĕмпех колхозниксем ĕçе организованно тухнинчен, бригадирсем калаçнине итлесе пынинчен килет. Колхозниксем уйрăмах юлашки вăхăтра пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Бригадирсем хушнă ĕçе халь кашни колхоз членĕ тивĕçлĕн пурнăçлать.

Колхоз тимĕрçи Федот Уткин— отечественнăй аслă вăрçă участникĕ, фронтран амакса таврăннă. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕ вăл юлашки уйăхсенче. Унăн ĕçĕ халь кӳç умĕнчех—колхозăн тырă вырмалли пур машинисем те хатĕр, вĕсемпе ыран тесен ыранах вырма тухма пулать. Кунсăр пуçне тата кĕреплелле çавасем 60, çурласем 60 ытла хатĕрленĕ. Ут тавранĕсемпе урапасем, тырпул тыткаламалли хатĕрсем те колхозăн çителĕклĕ, витнĕ итеме хырса тасатнă, çитес кунсенче тырă хумалли амбарсене тасатса дезинфекцилесе пĕтереççĕ.

Çапла хатĕрленеççĕ уйри тырпула пухса кĕртме Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем. Вĕсем ялхуçалăх ĕçĕн чи ответлă тапхăрне нихăçанхи пек мар организованно ирттерме, иртнĕ çулхинчен ытларах тырпул пухса илме пулаççĕ.

**Х. ЛИСИН.**
**ЭЛĔК. (Хамăр корр.).**

## Вĕлтĕренпе çумкурăкĕсенчен — силос

СОВЕТСКОЕ. Усăсăр сая кайкан вĕлтĕренпе çумкурăкĕсене пухса, колхозсем выльăх-чĕрлĕхсем валли сĕтеклĕ апат—силос хывса хăвараççĕ. Мăн Якăпри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 103 тонна силос хыврĕ. Çавалкасри Якаткассинчи «Волна революции» колхоз 72 тонна, Çуткӳльри «Восход» колхоз 50 тонна, Анат Сăнарти «Новый путь» колхоз 51 тонна тата Мăн Пакăшри «Красный партизан» колхоз 40 тонна хывнă. Асăннă колхозсенче силос хывас ĕçе колхоз çамрăкĕсемпе комсомолецсем активлăн хутшăннă, вĕсем ĕçе пуçарса пынă.

**Я. СИГАЕВ.**

## *Хĕл валли—вутă*

ЭЛĔК, июлĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Вырăнти учрежденисемпе предприятисем валли вутă хатĕрлес ĕçе кăçал районра çу пуçламăшĕнчех тытăннă. План тăрăх сентябрь уйăхĕччен кăçал 5.500 кубометр хатĕрлесе, 50—60 процентне турттармалла пулсан, паянхи куна 6.250 метр турттарнă. Элĕк вăтам шкулĕн (директорĕ Алексеева юлташ) икĕ вунăкунлăхра 300 кубометр вутă хатĕрлемеллеччĕ, июлĕн 16-мĕшĕ тĕлне вăл 380 кубометр хатĕрленĕ.

Юлашки вăхăтра çак ĕçе больницăра ĕçлекенсем те хастарлăн тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне вĕсем 300 кубометр вутă хатĕрленĕ.

Анчах та вутă хатĕрлесе турттарас ĕç пур предприятисемпе учрежденисенче те çителĕклĕ пулса пымасть-ха. Уйрăмах районри шкулсенче ку ĕç начар пырать. Районри перекет касси коллективĕ (заведующийĕ Войков) вутă хатĕрлеме халĕ çеç тытăнчĕ.

Чăваш Сурăмĕнчи тулли мар вăтам тата Мăн Вылăри вăтам шкулсем нимĕн чухлĕ те вутă хатĕрлемен. Мăн Вылăри вăтам шкул директорĕ Дмитриев юлташ шкула райисполком вутă хатĕрлесе парасса кĕтет.

# Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

# СУД ПРОЦЕСĔ

### *ИЮЛĔН 14-МĔШĔНЧИ ЛАРУ ВĔÇĔ*

**Н. КУЛИ,** июлĕн 14-мĕшĕ. Кĕске перерыв тунă хыççăн, Военнăй Трибунал айăпланакансене тĕпчеме тытăнать. Чи малтан Тищенкăна тĕпчеççĕ. Тищенко—пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çитиччченех сутăнчăк çын. Вăл нимĕçсен полицийне ĕçлеме хăй ирĕкĕпе кĕнĕ. Унтан ăна гестапона куçарнă, малтан «Зондеркомандăн» старшине пулнă, юлашкинчен вăл гестапо следователĕ пулса ĕçленĕ.

Государственнăй обвинени представителĕ юстици генерал-майорĕ Яченин: гестапо ĕçĕн системи мĕнле пулнă? тесе ыйтнă. Тищенко ирĕксĕрех çакна йышăннă: гестапора пĕтĕмпех нимĕне пăхăнман ирсĕре тухнă тискер йĕрке пулнă, совет çыннисене массăллăн пĕтерсе тăракан система пулнă.

Тытса хупнă çынсене гестапора никама та мĕншĕн айăпланине каламан,—тет Тищенко,—айăпланакансене свидетельсемпе куçа-куçăн тăратни пулман. Офицерсем яланах ӳсĕр пуçпа тĕпченĕ, арестленĕ çынсене шомполпа, патакпа, чăпăркапа, такалă атăсемпе тапса, çапса хĕненĕ, çӳç пайăркисене, чĕрнисене турта-турта кăларнă. Кристман, Раббе. Сальге, Сарго офицерсем т. ыт. те тытса хупнă хĕрарăмсене пусмăрланă.

Совет гражданĕсене тискеррĕн вĕлерме ятарласа тунă автомашинăсем—«душегубкăсем» çинчен ыйтнине хирĕç Тищенко тĕплĕн каласа парать, ку ĕçе вăл лайăх пĕлни курăнать. Уйрăмăнах вăл çакăн çинчен каласа кăтартать: «душегубка» ăшне 67 вăйпитти çынна тата 18 ачана тĕксе кĕртсе яннине пĕрре вăл хăй куçĕпех курнă.

Прокурор «душегубка» ăшне пăрахнă çав ачасем миçе çулта пулнине ыйтсан, Тищенко çапла каланă: «пĕр çултан пуçласа пиллĕке çитиччченхисем», тенĕ. Залра хăй тĕллĕн тухакан тарăхуллă сассем илтĕнсе кайнă.

Тищенко тăван çĕршыва сутнă пирки хăйне хăй пĕтĕмпех айăплă тесе йышăнать. Хăй ирĕкĕпех тăшман енне куçнине те, нимĕç полицине, унтан гестапона ĕçлеме кĕнине те, совет гражданĕсене вăрттăн сыхланине те, вĕсене хĕнесе асаплантарас, вĕсене массăллăн пĕтерес ĕçе хутшăннине те Тищенко пĕтĕмпех йышăнать.

Июлĕн 14-мĕшĕнчи суд ларăвĕ çакăнпа вĕçленет. (ТАСС).

### *ИЮЛĔН 15-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ*

**Н. ХУЛИ,** июлĕн 15-мĕшĕ. Суд паянхи ирхи ларура та айăпланакансене тĕпчет.

Айăпланакан 11 çынран 10-шĕ «Зондеркоманда СС—10—а» текен уйрăм командăра тăнă. Çав вăрттăн полици команди гестапон карательнăй органĕ пулнă. Вĕсем пурте унта ĕçлеме хăйсен ирĕкĕпе кĕнĕ, хăйсен палачла ĕçĕсене чукран туса пынă. «Зондеркомандăна» нимĕçсем, полицие илнĕ пекех, тĕрлĕрен уголовнăй элементсене илнĕ—растратчиксене, вăрăсене, хăй вăхăтĕнче совет сучĕ айăпланипе тĕрмере ларса тухнăскерсене, кулак пулнă çынсене, совет стройне хирĕçле çынсене.

Ирхи лару айăпланакан Тищенкона тĕпченинчех пуçланать. Çак сутăнчăк хăй ĕнер каласа кăтартнă фактсем çумне нимĕç оккупанчĕсем советсен хирлĕ гражданĕсене епле тискеррĕн тыткалани çинчен çĕнĕ фактсем хушса калать. Вăл çапла кăтартса парать: гестапо подвалĕсенче ларакан çынсене ĕçес килнипе асаплама пуçласан тăварлă шыв ĕçтернĕ, «душегубка» ăшне хĕрарăмсене тĕксе кĕртсе янă хыççăн унта пĕчĕк ачасене вут сыпписене пăрахнă пек ыватнă. Пĕррехинче «душегубка» ăшне пĕр ачана ирĕксĕр сĕтĕрсе пынă. Ача çав нимĕçе аллинчен çыртнă. Тепĕр нимĕç çав ачана çавăнтах прикладпа çапса пуçне салатса пăрахнă.

Кун хыççăн айăпланакан **Пушкарева** тĕпчеççĕ. Ку та гестапона ĕçлеме хăй ирĕкĕпех кĕнĕ. Вăл унта хăйне часах палăртнă та ăна вара «группенфюрер» туса хунă. Ытти гестаповецсемпе пĕрле вăл час-часах станицăсене кайса совет активисчĕсене, партизансем майлă тăракан çынсене тупса пама тăрăшнă.

Гестапон усал ĕçĕсем çинчен каласа панă май, Пушкарев чылай фактсем кăтартса парать, вĕсем пĕринчен тепри тискертерех. Пушкарев нимĕç оккупанчĕсен нумай усал ĕçĕсене хутшăннă. Краснодартан тухса тарас умĕн нимĕçсем гестапо çуртне вут тивертнĕ. Пушкарев, хăй каланă тăрăх, çавăн чух хуралта тăнă, вăл хуралти ытти гестаповецсемпе пĕрле гестапо подвалĕнчи совет çыннисене тарса ӳкме паман. Вĕсем хуралтан тыткăнри çынсем вутра çунса кайсан тин уйрăлнă.

Пушкарев кăтартса панă тăрăх, нимĕç оккупанчĕсен ирсĕр провокацийĕсем тăрă шыв çине тухаççĕ. Гестаповецсем пĕтернĕ совет çыннисене оккупантсем совет влаçĕ пĕтернĕ пек туса кăтартма хăтланнă.

Хăйĕн кăтартуне вĕçлес умĕн Пушкарев çакна каласа парать: нимĕçсем тухса тарас умĕн темиçе кун малтанах нимĕçсен 17-мĕш армин командующийĕнчен Руоф генерал-полковникран вăрттăн приказ çитнĕ. Унта çапла каланă. Краснодартан тухса каймалла пулсан, пĕтĕмпех вутпа çунтарса ямалла, совет гражданĕсене мĕн май килнĕ таран ытларах пĕтермелле, ыттисене хăйсемпе пĕрле хуса каймалла.

Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пыни кăна çав тискер шухăша пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме паман.

Кун хыççăн **Речкалов, Мисан, Напцок** айăпланакансене тĕпчеççĕ:

Речкалов растратчик, вăрă пулнă. Вăл совет сучĕ айăпланипе икĕ хутчен тĕрмере ларса тухнă. Ку та гестапона ĕçлеме хăй ирĕкĕпе кĕнĕ. Вăл, хăй каланă тăрăх, «сахалтарах ĕçлесе, укçа ытларах паракан ĕç шыранă». Ытти айăпланакансем пекех, вăл та облавăсене кайса çӳренĕ, тытса хупнă совет çыннисене хуралланă, нимĕç палачĕсем мĕн тума хушнă, çавна пурне те тăрăшса туса тăнă. (ТАСС).

# Икĕ колхоз ĕçĕсем

ЕТĔРНЕ. Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхоз икĕ çул каярах районра юлса пыракан колхоз пулнă.

Колхоз председателĕ пулма Г. Г. Мардарейкин юлташа суйласа лартнă хыççăн, колхозри ĕçсем сисĕнмеллех малалла шурĕç. Иртнĕ çул колхоз пур ĕçсене те вăхăтра вĕçлерĕ. Колхозниксем кăçалхи çул татах та аван ĕçлеме пуçларĕç. Çуракине вĕсем кĕске срокра, çичĕ кун хушшинче туса ирттерчĕç. Ун хыççăн лайăх çитĕнекен тырпула пухса кĕртме хатĕрленме тытăнчĕç.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз уя 8200 лав тислĕк кăларчĕ, 86 гектар çĕртме сухи турĕ. Паянхи кунччен 40 тонна силос хурса хăварнă, 38 гектар çинчи утта çулса, типĕтсе капана хывнă.

Уборка вăхăтĕнче ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсем юсавлă пулни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна шута илсе, колхоз тимĕрçи Фин юлташ хăйĕн 16 çулхи Семен ятлă ывăлĕпе кушĕн-çĕрĕн ĕç хатĕрĕсем юсаççĕ. Уборкăра кирлĕ 2 жнейкăран пĕрине юсаса лартнă, çак кунсенчех теприне те юсаса çитереççĕ, 116 çурла шăмманă, 20 урапа юсанă.

Колхозăн 18 лаша. Вĕсене старши конюх Чиликов юлташ тăрăшнипе аван пăхаççĕ: вăхăтра çитереççĕ, вăхăтра шăвараççĕ. Лашасем пурте таса та мăнтăр. Вĕсем валли лаша хатĕрĕсем 32 мăшăр хатĕрленĕ.

Уборкăна ирттерме ĕç планĕ тунă. Унта кам хăш вăхăтра ăçта пулмаллине те кăтартнă. Унтах ачасен яслисене уçма, пĕрле апатланмалли столовăй организацилеме палăртнă.

Пĕтĕмпех урăхла ĕçсем кӳршĕри Урапакассинчи «Правда» колхозра.

«Правда» колхоз иртнĕ çулсенче малта пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Ялхуçалăх ĕçĕсене яланах кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса пынă, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татнă.

Колхоз руководителĕсем сӳрĕккĕн ĕçленипе пула, кунта уборкăна япăх хатĕрленчĕç.

Колхозăн 295 гектар çинчен тырпул пуçтарса кĕртмелле. Вăл шутран пĕр гектар та комбайнпа пуçтарса кĕртме палăртман. Çапла вара пĕтĕм тырпула алăпа тата жнейкăсемпе вырмалла пулать. Анчах пулин те паянхи кунччен тăватă жнейкăран пĕрне те юсаман, çавасемпе çурласене шăлаттарман, туптатман. Çавăн пекех 3 молотилка, 8 веялка юсама тытăнасса кĕтсе лараççĕ.

10 складран 8 складне кăна тасатнă, пĕр складне те дезинфекцилемен. Итемсем çĕрĕк улăмпа тулса ларнă, вĕсене тасатасси çинчен никам та шухламаççĕ.

Бригадăсене звеносене уйăрса пайланă. Анчах вĕсене участоксем çирĕплетсе паман. Учет ĕçне те япăхтарса янă. Бригадирсенчен пĕри те, тĕслĕхрен, çум çумланă çĕрне уйрăм колхозниксем нормăсене мĕнле тултарнине пĕлмеççĕ.

Ку çитменлĕхсем ĕнтĕ колхоз руководителĕсем (колхоз председателĕ Скворцов юлташ) уборкăна хатĕрленес енĕпе нимĕн те туманнине çирĕплетсе параççĕ.

**А. КРАСНОВ.**

# ТАСС опроверженийĕ

Америкăри радио Пирсон политкомментатор каланине пĕлтернĕ. Вăл каланă тăрăх, Гитлер Совет Союзĕнчи наступление май уйăхĕнче пуçласа ярас вырăнне акă мĕн пирки июль уйăхĕнче кăна пуçласа янă пулать: тĕнĕл держависем Япони урлă Мускава мир тăвасси çинчен сĕнӳ панă. Гитлер совет правительствинчен çав сĕнӳ пирки ответ килессине кĕтсе тăнă пулать. Пур пек сведенисем тăрăх, японецсем Совет Союзне Лăпкă океанăн çурçĕр пайĕнче шăнман порт, çавăн пекех тата Курильски утравсемпе Сахалинăн кăнтăр пайне пама пулнă, унсăр пуçне тата Перси заливĕ урлă Инди океанне тухма çул пама пулнă, имĕш. Совет Союзĕ çав сĕнӳри условисене йышăнмасан, тĕнĕл держависем ăна Гитлер Мускав çине наступлени пуçласа ярассипе тата Япони Çĕпĕре тапăнса кĕрессипе хăратнă пулать. Анчах та Совет Союзĕ хăйĕн сăмахне çирĕп тытнă, тĕнĕл держависен сĕннипе йышăнмасăр сирсе янă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: американецсен çав комментаторĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинче Япони урлă мирлĕ калаçусем пулса иртнĕ тесе пĕлтерни—малтан пуçласа вĕçне çитиччченех шухăшласа кăларнă япала пулса тăрать, ун пек пĕлтерме май паракан сăлтав пачах та пулман.

# *Ют çĕршывсенче*

## Рузвельтпа Черчилль Итали халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Алжирти радио Итали халăхне çакăн пек чĕнсе каланине панă:

«Итали халăхĕ патне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Великобританин премьер министрĕ янă послани.

Халĕхи вăхăтра Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Канадăн хĕçпăшаллă пĕрлешӳллĕ вăйĕсем Эйзенхауер генерал тата унăн заместителĕ Александер генерал ертсе пынипе Сирĕн çĕршыв территорийĕ çинче вăрçаççĕ. Çакă вăл Сире Муссолини тата унăн фашистла режимĕ намăсла çулпа ертсе пынă пирки кăна пулса тăма пултарчĕ.

Муссолини Сире çак вăрçа тĕнчери халăхсемпе вĕсен ирĕклĕхне тискеррĕн асаплантаракан çыннăн тарçисем вырăнне хурса туртса кĕртрĕ.

Муссолини Сире çак вăрçа Гитлер çиеле тухрĕ ĕнтĕ тесе туртса кĕртрĕ. Италие сывлăшран та, тинĕсрен те вăйлăн тапăнма майсем пуррине нимĕн те пăхмасăр, Сирĕн фашистла лидерсем Сирĕн ывăлăрсене, Сирĕн карапсене, Сирĕн сывлăшри вăйăрсене инçетри çапăçу хирĕсене ячĕç, Германие вăл Англие, Российăна тата пĕтĕм тĕнчене çĕнтерсе илме хăтланнă çĕрте пулăшас терĕç.

Нацистсен аллинче тăракан Германин планĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре хутшăнни итальянецсен ирĕклĕхĕшĕн тата культуришĕн тăнă авалхи традицийĕсене тивĕçлĕ мар; итальянецсен çав традицийĕсем Америкăпа Великобритани халăхĕсене ырă пурнăç тума нумай пулăшнă.

Сирĕн салтаксем Итали интересĕсемшĕн мар çапăçаççĕ, вĕсем нацистсен Германийĕшĕн вилеççĕ. Вĕсем паттăррăн çапăçнă, анчах та нимĕçсем вĕсене вырăссен фронтĕнче те, Африкăри çапăçусен мĕнпур хирĕсенче те Эль-Аламейнăран пуçласа Бон мысĕ патне çитиччченех сутса пăрахса тарнă.

Паян ĕнтĕ нимĕçсен пĕтĕм тĕнчене çĕнтерсе илес шанчăкĕсене пур фронтсенче те пĕтерсе тăкнă. Итали çинчи пĕлĕтре Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин аслă сывлăш çар вăйĕсем хуçа пулса вĕçеççĕ. Италин тинĕс çыранĕсене Англи тата союзниксен тинĕс-çар вăйĕсен çав тери пысăк ушкăнĕсем хăратса тăраççĕ, Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче тинĕс-çар вăйĕсем çавăн чухлĕ пухăнса тăни ĕмĕрсем хушшинче те пулман. Сире хирĕç тăракан вăйсем нацистла Германин вăй-халне аркатса тăкма тупа турĕç, мĕншĕн тесен нацистла Германия нимĕçсене пуç пулса тăракан раса тесе йышăнма килĕшмен халăхсене пурне те чура тăвасшăн, пĕтерсе лартасшăн, вĕлересшĕн, вĕсене никама та хĕрхенсе тăмасть.

Италин çăлăнса юлас тесен пĕртенпĕр шанчăк кăна пур, вăл—пĕрлешӳллĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен çĕнтерӳллĕ хăватне хисеплĕн паранасси.

Анчах та эсир нацистсен усал вăйĕсене пулăшма тăракан фашистла режима малалла та чăтса тарсан, вара сирĕн хăвăр ирĕкĕрпе суйласа илнĕ шăпа тивлетне тӳсмелле пулать. Итали территорийĕ çине шала кĕрсе кайса эпир савăнăç шырамастпăр, Итали халăхĕн тăван илĕсем патне пурне те пĕтерекен хаяр вăрçăпа çитнипе эпир хамăр чуна савăнтарма шутламастпăр. Эпир усал, суя лидерсене тата вĕсен Италие çак йывăр пурнăçа кĕртсе янă шухăшĕсемпе ĕçĕсене пĕтерсе лартма тăтăклă шут тытрăмăр.

Эсир пĕрлешӳллĕ нацисен пĕрлешнĕ вăйĕсене хирĕç тăнă кашни минута, эсир тăкакан юнăн кашни тумламĕ пĕр усал ĕçе кăна пулăшаççĕ, вĕсем фашистла тата нацистла лидерсене хăйсем тунă хура ĕçсемшĕн тивĕçлĕ ответ тытас вăхăта кайт та пулин тăсса хăтăлса пурăнма мел параççĕ.

Сирĕн интересене пурне те, Сирĕн мĕнпур традицисене нацистла Германипе Сирĕн хăвăрăн сутăнчăк суя-лидерсем тахçанах сутнă. Çав суя лидерсене пĕрисене те, теприсене те пĕтерсе тăксан тин çĕнĕрен çуралнă Италия Европăри халăхсен çемьисенче хисеплĕ вырăн йышăнассине шанса тăма пултарать.

Итальянецсем! Халĕ Сирĕн вăхăт çитрĕ. Хăвăра хисеплес тĕлĕшпе те, Хăвăр интересĕрсем енĕпе те, наци тивĕçлĕхĕне хăрушсăрлăха, мирлĕ пурнăçа çĕнĕрен пуçарса яма Хăвăр ĕмĕтленни тĕлĕшпе те ĕçсем мĕнле тăнине сӳтсе-явăр. Сирĕншĕн халĕ вăхăт çитсе çапрĕ ĕнтĕ. пултаса татăр — итальянецсем Муссолинипе Гитлершĕн вилмелле-и е Италипе цивилизацишĕн пурăнма тивĕçлĕ? Рузвельт, Черчилль».

## Союзниксен Сицили утравĕ çине аннă войскисен вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: союзниксен флочĕ тăшманăн Катанияри аэродромне тата судноисене питĕ хаяррăн пенĕ.

Американецсен 7-мĕш армийĕ темиçе миля малалла куçнă, кирлĕ объектсене йышăнса илнĕ.

Леттини, Скордиа, Модика, Риези хулисене, çавăн пекех тата ытти çичĕ хулана йышăнса илнĕ.

Союзниксем ку таранччен 20 пин çын ытла тыткăна илнĕ.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен 8-мĕш армийĕ тăшман танкĕсен чи вăйлă атакине сирсе янă та Катания патнелле куçнă. Катания лапамĕн çурçĕр енчи пайĕнче 3 ял йышăнса илнĕ.

Мессина проливĕ урлă çӳреме пачах та тенĕ пекех чарса лартнă пирки, итальянецсен командованийĕ хăйĕн Сицили çинчи войскисем валли кирлĕ япаласене Тирренски тинĕс урлă турттарса пыма хăтланать.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эйзенхауер генерал Александер генерала Сицилин военнăй губернаторĕ пулма лартнă. Александер генерал Сицили утравĕ çинчи верховнăй влаçăн ĕçĕсене туса тăмалла.

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**


**ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР**

июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

***АКТРИСА***

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сценарийĕ—Эрдманпа Вольпинăн.

Постановки—Сталинла премисен лауреачĕн А. Траубергăн.

Режиссерĕсем—М. Шапирăпа Н. Кошеверова.

Операторĕ—А. Москвин.

Тĕп рольсене вылякансем: республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ Г. Сергеева тата Сталинла премисен лауреачĕ Б. Бабочкин.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Главнефтесбытăн Чăваш Управленине Управленире тата республикăри предприятисенче ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: старши бухгалтерсем, снабженецсем, пожарнăйсем тата вахтерсем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Володарский урамĕ, Пичет çуртĕ, 4-мĕш хут, 46-мĕш пӳлĕм.

Центрти Главзаготскотăн Чăваш республикăнчи конторине яланхи ĕçе главнăй бухгалтер тата машинистка вăскавлăн кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 21. Телефон 3—16 е 6—12.

**Мускав облаçĕнчи Педагогика Институчĕ** 1943—44 çул валли 1-мĕш курса тата аслă курсене те вĕренме студентсем илесси çинчен пĕлтерет. Çак факультетсене илеççĕ: естествоведение, географи, физикăпа математика, истори, чĕлхепе литература.

Студентсене общежитие вырнаçтараççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: 1) автобиографи, 2) вăтам шкул пĕтерни çинчен калакан аттестат, 3) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, 4) виçĕ фотокарточка.

Адрес çапла: Киров облаçĕ, Мамлыж хули, Комсомольски урам, 4-мĕш номерлĕ çурт, Мускав облаçĕнчи Педагогика Институчĕ. 3—2

Шупашкарти столовăйсен трестне çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: старши бухгалтерсемпе бухгалтерсем, продовольстви отделĕн начальникĕ, паранкăпа пахча-çимĕç тиêтес тĕлĕшпе ĕçлекен инструктор, бухгалтер-ревизор, инструктор-кулинар, статистик.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, 11. Столовăйсен тресчĕн кадрсен пайĕ.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕ н—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 199

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.